Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ

# Писательсемпе тĕл пулни

(Асаилӳсем)

## ЫРĂ СУНАТЬ

### АЛЕКСАНДР ФАДЕЕВ

1950 çул. Кăçхине. Мускаври Союзсен çуртне халăх туллиех пухăннă. Кунта чăваш литературипе искусствин кaçĕ уçăлмалла. Эпир, чăваш писателĕсем, тĕп хулари паллă писательсемпе пĕрле президиума тухиччен сцена хыçне пухăнтăмăр... Унччен те пулмарĕ, пирĕн пата яштака пӳллĕ, шурă çӳçлĕ патвар çын пырса тăчĕ. Вăл пурне те алă парса тухрĕ. Хăй питĕ хаваслă, кулса çеç тăрать. Ку — Александр Александрович Фадеев, СССР писателĕсен Союзĕн правленийĕн генеральнăй секретарĕ пулчĕ-мĕн. Кĕçех Александр Александровича Союзсен çуртĕнче пулмалли концертăн программине пачĕç. Вăл ăна хăвăрт пăхса тухрĕ. «Аван программа, анчах пĕр пекрех япаласем нумайăи сисĕнет. Халăх юррисем, шӳтлĕрех номерсем ытларах кĕртмелле пулнă»,— терĕ пирĕн юлташсене асăрхаттарса.

Литературăпа искусство каçне, кĕске сăмах каласа, А. А. Фадеев уçрĕ. Вăл чăваш халăхне ĕçе юратакан, пултаруллă халăх терĕ, пирĕн писательсемпе культура деятелĕсене пĕтĕм чун-чĕререн ырлăх-сывлăх сунса саламларĕ.

Литературăпа искусство каçĕсем вĕçленнĕ хыççăн СССР писателĕсен Союзĕн правленийĕнче чăваш литературин малашлăхĕ çинчен ăшă, туслă калаçу пулса иртрĕ. Ăна та А. А. Фадеев ертсе пычĕ. Кунта Мускав писателĕсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене туха-туха каларĕç, ырă сĕнӳсем пачĕç. Ĕçлĕ канашлу хыççăн та Александр Александрович Фадеев пирĕнпе чылайччен калаçрĕ, пурнăçăмăр, ĕçĕмĕрсем çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕ, ырă канашсем пачĕ.

Александр Александрович Фадеев ман пурнăçăмра тата тепĕр ăшă асаилӳ хăварчĕ. Çав çулхинех эпĕ сасартăк йывăр чирлесе ӳкрĕм. Мана сыватма кирлĕ эмеле тупма ун чухне Шупашкарта çав тери йывăрччĕ. Кунсерен хавшаса пыратăп. Мĕн тумалла? Эпĕ чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Аркадий Александрович Эсхель патне канаш ыйтма кайрăм.

— Кун пек чух пире яланах Александр Александрович Фадеев пулăшаканччĕ. Ман çак кунсенче ĕçпе Мускава каймалла. Александр Александрович патне кĕрсе тухам, ăна сан йывăрлăху çинчен каласа парам,— терĕ вăл мана...

Нумай та вăхăт иртмерĕ, эпĕ Мускавран, СССР Сывлăх министерствинчен, авиапочтăпа ман ятпа янă эмеле илтĕм, унпа сипленме пуçларăм. Эпĕ сывалтăм, каллех ĕçе кӳлĕнтĕм. Александр Александрович пулăшăвĕ, çынлăхĕ сыватнăн туйăнать халь мана.

## ЗАМОЙСКИЙ САЛАМĔ

1957 çулхи июнĕн 11-мĕшĕ. Ирхине. Кунта ытла та лайăх. Тӳпере хĕвел хĕртет. Эпĕ Малеевкăри писательсен çурчĕ çумĕпе шăнкăртатса юхса выртакан çырма хĕрне тухрăм. Кайăксем юрра шăрантараççĕ. Эх, мĕнле ырă та илемлĕ тавралăх!

Çырма хĕррипе ман паталла çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ патвар çын утса килет.

— Сывлăх сунатăп,— терĕ çак çын ман тĕле çитсен.

— Ирхи салам! — терĕм эпĕ. Паллашрăмăр. Ку вăл вырăссен паллă писателĕ Петр Иванович Замойский пулчĕ-мĕн.

— Эпĕ чăваш писателĕсенчен Петĕр Хусанкая лайăх пĕлетĕп. Пултаруллă, сăпай, ĕçчен çын вăл Петĕр. Шупашкара кайсан, ăна манран пысăк салам калама ан манăр,— терĕ Петр Иванович. Писатель мана хăй ĕçлесе пурăнакан пӳлĕме кĕрсе курма сĕнчĕ. Эпĕ килĕшрĕм. Нумай вăхăт калаçса лартăмăр. Петр Иванович хăйĕн ĕçри юлташĕсем çинчен, уйрăмах Александр Александрович Фадеевпа туслă пурăнни çинчен хавхаланса кала-кала пачĕ.

— Нумай вăхăт хушши чирпе тертленетĕп. Анчах та, темле йывăр пулсан та, чуна произведенисем çырас ĕмĕт канăç памасть. Кашни кун çапла ĕçлетĕп. Каласа хăвармалли нумай. Эпĕ пурнăçра усаллине те, ыррине те сахал мар курнă. Октябрь пире халĕ мĕн кирлине йăлтах пачĕ. Ун çинчен те çамрăк ăрăва каласа памалли çав тери нумай,— терĕ мана Петр Иванович.

Çав кунах вăл мана писательсен çурчĕ сывă-

хёнчи пӗр яла илсе кайрӗ. Унта ун мӑшӑрӗ Нина Павловна ятарласа канма килнӗ-мӗн. Ӑна эпир ҫӗнӗ хаҫат-журнал, чечек ҫыххи кайса патӑмӑр. Нина Павловна, Петр Иванович пекех, ҫынпа тарават калаҫма юратакан хӗрарӑм пулчӗ.

— Ҫапла, Петр Ивановичран эпӗ те тӗлӗнетӗп. Вӑл кану мӗнне пӗлмест, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет,— терӗ Нина Павловна.

Петр Иванович мана Малеевкӑра пурӑннӑ кунсенче Георгий Шолохов-Синявский, Галина Серебрякова, Яков Белинский, Виктор Гончаров вырӑс писателӗсемпе, ҫӗршыври паллӑ художникпе, «Герой вилӗмӗ» картина авторӗпе, Федор Богородскипе паллаштарчӗ. Паллашни ҫав тери усӑллӑ пулчӗ. Вӗсем пурте чӑваш халӑхӗпе, литературипе интересленекен ҫынсем пулчӗҫ. Федор Семенович Богородский художник вара хӑй революци хыҫҫӑн чӑвашсем патӗнче пулса курни, картинӑсем ӳкерни ҫинчен хавхаланса кала-кала пачӗ.

— Эпӗ сирӗн патӑрта ӳкернӗ картинӑсене халӗ те упраса усратӑп.. Манӑн вӗсене чӑваш халӑхне парнелес кӑмӑл пур,— терӗ.

Эпӗ пултаруллӑ художнике уншӑн пӗтӗм чунчӗререн тав турӑм.

Замойский паллаштарнӑ Шолохов-Синявский те чӑвашсем ҫинчен нумай ырӑ сӑмах каларӗ. Унпа эпир лайӑхах туслашрӑмӑр. Пӗр-пӗрин патне ҫырусем ҫыраттӑмӑр. Писатель мана 1958 ҫулхи декабрӗн 7-мӗшӗнче хӑйӗн ҫӗнӗ «Далекие огни» кӗнекине парнелерӗ.

Ҫапла сӑпай та ырӑ кӑмӑллӑ, ӗҫчен те пултаруллӑ ҫынсемпе тӗл пулни чун-чӗрене ҫӗклет. Пурӑнас, ӗҫлес килет.

## ТИХОН СЕМУШКИНПА...

Вырӑссен паллӑ писателӗпе Тихон Захарович Семушкинпа, «Алитет уходит в горы» роман авторӗпе пӗрле эпӗ 1967 ҫулхи кӗркунне Хура тинӗс хӗрринче, Ялтӑри писательсен пултарулӑх ҫуртӗнче пултӑм. Пӗр ирхине эпӗ уҫӑлма тухнӑччӗ. Ҫав вӑхӑтра Тихон Захарович ман ума пычӗ те:

— Эсӗ, юлташӑм, Чӑваш ҫӗршывӗнчен иккен. Санпа паллашма питӗ хавас. Эпӗ сирӗн Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский драматурга лайӑх пӗлетӗп. Пултаруллӑ, ӗҫчен ҫын Иоаким Степанович. Ман «Алитет уходит в горы» роман тӑрӑх ӳкернӗ кинокартина пур. Иоаким Степанович унта шаман рольне ӑста вылясаччӗ. Ку мана ҫав тери савӑнтарчӗ. Эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, Кошкинский халӗ те литературӑра хастар ӗҫлет иккенха. Ватӑлмасть,— терӗ.

Эпир Тихон Захарович Семушкинпа час-часах тӗл пулаттӑмӑр. Вӑл манран чӑваш халӑх пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ, культури ҫинчен ыйта-ыйта пӗлетчӗ, хӑй Чукоткӑра пулни, чылай ҫулсем хушши унти халӑх пурнӑҫне, йӑлине тӗпчени ҫинчен хавхаланса кала-кала паратчӗ.

— Чукчасем ӗҫчен те тарават ҫынсем. Совет саманинче вӗсем калама ҫук вӑй-хал илчӗҫ, чӑнчӑн телей тупрӗҫ. Вӗсен пурнӑҫӗ, культури ҫултан ҫул ӳссе, хӑват илсе пынишӗн хӗпӗртетӗп,— терӗ вӑл.

## ТУРСУН-ЗАДЕН АШӐ СӐМАХӖ

1967 ҫулхи мартӑн 16-мӗшӗнче Мускавра писательсен Тӗп ҫуртӗнче тутарсен паллӑ писателӗ Галимзян Ибрагимов ҫуралнӑранпа 80 ҫул тултарнине паллӑ турӗҫ. Эпир, ҫак юбилее ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтессисенчен килнӗ писательсем, литераторсен ҫуртне чаплӑ лару пуҫланиччен пӗр ҫур сехет маларах пуҫтарӑнтӑмӑр. Эпӗ пӗр пӳлӗме кӗтӗм. Пӑхатӑп та—кӗтесре пӗр ҫын шухӑша кайса ларать. «Ку ҫынна эпӗ таҫта курнӑ»,— тесе шухӑшлатӑп хам ӑшӑмра. Вӑл хӑй ҫав тери ҫирӗп, сарлака хулпуҫҫиллӗ, шурӑ ҫӳҫлӗ ҫын. Куҫӗсем чакӑр, йӑлтӑртатса ҫунса тӑраҫҫӗ. Эпӗ ун патне хӑвӑрт утса пытӑм та алӑ патӑм, хам ята каларӑм.

— Таджикистанран, Мирзо Турсун-Заде,— терӗ вӑл та мана хӑйпе паллаштарнӑ хушӑра.

— Паллашма тӗл килнӗшӗн питӗ хавас. Эпӗ эсир ҫырнӑ «Инди сӑввисене», «Тахирпе Зухра», «Эпӗ ирӗклӗ Хӗвелтухӑҫӗнчен» произведенисене вуланӑ. Ун пек лайӑх япаласене пысӑк поэт ҫеҫ ҫырма пултарнӑ,— терӗм.

Турсун-Заде ман ҫине шухӑшлӑн пӑхса илчӗ те: «Начар ҫырсан, халӑх йышӑнмасть»,—терӗ. Чылайччен калаҫса лартӑмӑр. Ҫав вӑхӑтра эпӗ Турсун-Заде питех те сӑпай, совет литератури чысӗшӗн чун-чӗререн ҫунса тӑракан ҫын иккенне лайӑх туйса илтӗм.

— Пурне те тумалла: ҫырмалла, вулакансем патӗнче те пулмалла, тӗнчери мире те сыхламалла... Вӑхӑт ҫитсех каймасть,—терӗ Турсун-Заде.

Эпӗ ун умне, сӗтел ҫине, хама Галимзян Ибрагимов юбилейне чӗннӗ йыхрав хутне хутӑм та:

— Мирзо тусӑмӑр, ҫакӑнта асӑнмалӑх автограф ҫырса параймӑр-ши? — терӗм. Вӑл килӗшрӗ, ҫавӑнтах мана автограф ҫырса пачӗ.

— Манран Хусанкайпа Ухсая, чӑваш писателӗсене пурне те салам кала,— терӗ Турсун-Заде.